28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ОКТЯБРЬ 28 ВЫРСАРНИКУН 210 (6961) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ÇАМРĂК ВЫЛЬĂХСЕНЕ ЛАЙĂХ ПĂХСА СЫХЛАСА УСРАР!

Йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетни колхозниксемпе хуларн ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас ĕçре мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни пурнăшĕн те паллă. Колхозăн выльăхсем йышлă пулсан, вĕсем тухăçлă пулсан, колхоз хуçалăхĕ тĕреклĕнсе пырать, колхоз пуянланса пырать, çакă вара колхозниксен пурнăçне лайăхлатса пыма пулăшать. Ахальтен мар ĕнтĕ халлапра: «Выльăхĕ пулсан, тулăхĕ те пулĕ», тесе калаҫă.

Республикăри колхозсем выльăхсен йышне ÿстерес тĕлĕшпе кăçал чылаях пысăк çитĕнÿсем турĕç. Государство ку енĕпе панă плана республика пур выльăхсем енĕпе те тултарчĕ. Çакă вăл — пысăк ĕç. Анчах та плана тултарнипех лăпланса ларни пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ. Выльăхсен йышне кирлĕ чухлех ÿстерме пултартăмăр пулсан, вĕсене тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа усрама пĕлес пулать. Çакă вара—татах та пысăкрах задача, мĕншĕн тесен выльăх-чĕрлĕхе эпир чирчĕртен, хĕллехи сивĕсенчен тата тĕрлĕ ăнсăртлăхсенчен упраса хăварма пултараймасан, выльăх йышĕ хăвăртах та çăмăллăнах чакса кайма пултарать. Ку хăрушлăхран пирĕн яланах сыхланмалла.

Партипе правительство выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе колхозсен чи пысăк задачисенчен пĕри тесе хакласçĕ, çав задача çинчен яланах астутарса тăраççĕ. ВКП(б) Обкомĕн 22-мĕш пленумĕ ку ыйтăва ятарласа сÿтсе-явса решени йышăнчĕ, Обком бюровĕ те çак тĕлĕшпе пирĕн колхозсем мĕнле ĕçлени çинчен час-часах сÿтсе-явса, тĕплĕ кăтартусем парать, çитменлĕхсене пĕтермелли майсене палăртать.

Апла пулин те, хăшпĕр районсенчи партипе совет организацийĕсем тата Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ те çав кăтартусене часах манса каяççĕ, вăхăтра асăрхаттарса тăмасан, пурнăçа кĕртме хыпăнсах каймаççĕ. Илер, сăмахран, çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа усрас ыйтăва. Тивĕçлипе йышăнса илмен тата тытса усрама çурт-йĕрсем çитмен пирки, республикăра кăçалхи 9 уйăх хушшинче çуралнă тихасенчен 6,9 процентĕ вилнĕ, çав вăхăт хушшинчех пăрусем 8,6 процент, сысна çурисем 12 процент, путексем 8,7 процент вилсе пĕтнĕ. Çакна ĕнтĕ пиепле те йĕркеллĕ тесе йышăнма çук. Çамрăк выльăхсене сыхласа усрасси уйрăмах Ишлей районĕнчи колхозсенче начар пулса пырать: кунта кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче тихасем 10,4 процент, пăрусем 7,3 процент, сысна çурисем 18,2 процент тата путексем 12,6 процент вилнĕ. Улатăр, Первомайски, Йĕпреç, Чурачăк, Калинино, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче те çамрăк выльăхсене сыхласа усрас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Уйрăмах Çĕрпÿ районĕ пирки чарăнса тăмалла. Ку район иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе малта пыракан районсенчен пĕри пулнă. Кăçал вара çавна калама çук. Çамрăк выльăхсем кунта ытти районсенчинчен чылай нумайрах вилсе пĕтнĕ.

Паллă ĕнтĕ, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх вилсен, ун çинчен кашни хутĕнчех партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсенче, колхоз правленийĕн ларăвĕнче е колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе-явмалла, выльăх мĕншĕн вилнине, уншăн кам айăплине палăртса, ответ тыттармалла. Çак йĕркене вара нумай колхозсенче пурнăçа кĕртмеççĕ. çавна пула выльăх çине чунсăррăн пăхакансем ответ тытмасăрах юлаççĕ, колхоза пысăк сиен кÿреççĕ. Колхозăн обществăллă харпăрлăхне çавăн пек хакламасăр, перекетлемесĕр, упрамасăр ĕçлес йăлана хăвăртрах пĕтерес пулать.

Выльăх-чĕрлĕх йышне пĕрмаях ÿстерсе пырасси çамрăк выльăхсене пурне те упраса хăварса, пăхса çитĕнтернинчен килет. Ку вара, хăй черечĕпе, çамрăк выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленнинчен килет. Тÿрех калас пулать, çак ĕç республикăра халĕ питех те çителĕксĕр пырать. Республикăри колхозсенчи 1622 пăру витинчен 529 витене кăна октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса хĕле хатĕрленĕ. Сыснасем, сурăхсем усрамалли витесене юсаса хатĕрлес ĕç те çавнашкалах япăх пулса пырать-ха. Ку енĕпе те Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Улатăр районĕсем начар ĕçлеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн ăнăçлăхне татса параканни вăл—выльăх апачĕ пулса тăрать. Кăçал выльăх апачĕ хатĕрлес енĕпе уйрăмах вăйлă ĕçлени кирлĕ. Халлĕхе çакă курăнмасть-ха. Советски районра выльăх валли шултра апат хатĕрлемелли плана октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 5,9 процент кăна тултарнă, Тăвай, Октябрьски, Вăрмар районĕсем 9—16 процент таран çеç пурнăçланă. Çамрăк выльăхсем валли çулçăллă апат, вĕлтрен, армути хатĕрлес ĕçе чылай районсем тивĕçлипе хака хумарĕç.

Выльăхсен йышне малашне те ÿстерсе пырас, çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтерес тесен, çÿлте асăннă çитменлĕхсене халех пĕтерни кирлĕ. Выльăха, уйрăмах çамрăк выльăха, хĕл каçарма халех хатĕрленсе çитмелле. Çакна май кашни колхозрах мĕнпур витесене юсаса ăшăтмалла, выльăх апачĕ çителĕклĕ чухлех пухса хумалла. Апата перекетлĕн тыткаласси çине, ăна пăсăлса каясран, салатса пĕтересрен сыхласси çине кăçал питех те тимлĕн çаврăнса пăхни кирлĕ. Кашни колхозра выльăх апатне расходламалли нормăсемпе плансем туса, вĕсене çирĕп пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас пулать.

Колхоз ферми ÿссе вăйланса пырасси не унта ĕçлекен колхозниксем татса параççĕ. Вĕсем тÿрĕ кăмăлпа, тăрăшса ĕçлесен кăна ферма колхоза пысăк тупăш пама пултарать. Çавăнпа та фермăра ĕçлеме çынсем суйласа илес, вĕсен ĕçне пĕлсе организацилес тесе. ферма заведующийĕсен кăна мар, колхоз председателĕсен хăйсен те ялан тăрăшас пулать. ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕркене çирĕп пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Халиччен çуралнă çамрăк выльăхсене лайăх пăхса сыхласа усранипе пĕрлех, килес вăхăтсенче çуралаканнисене кĕтсе илме те хатĕр пулни кирлĕ. Пĕтĕ выльăхсене тĕрĕс пăхса усрамалла, фермăсенче çамрăк выльăха кĕтсе илме талăкĕпех дежурнăйсем пулмалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçпе вăхăтран вăхăта кăна, мĕнле те пулин кампани килсе çитсен кăна интересленекен руководительсем сахал мар-ха пирĕн. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен тата çĕрĕç органĕсен çав сиенлĕ йăлана тĕппипех пĕтермелле. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе куллен ертсе пырсан кăна вăл ăнăçлă пулма пултарать.

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă панă
1. Вăрнар	106,2
2. Етĕрне	93,4
3. Сĕнтĕр	92,2
4. Муркаш	91,4
5. Çĕрпÿ	91,2
6. Красноармейски	90,9
7. Шăхасан	90,5
8. Элĕк	90,3
9. Советски	90,0
10. Чурачăк	89,8
11. Сĕнтĕрвăрри	88,0
12. Шупашкар	87,3
13. Елчĕк	84,1
14. Калинино	83,6
15. Пăрачкав	83,2
16. Вăрмар	81,1
17. Октябрьски	79,2
18. Куславкка	77,6
19. Канаш	76,2
20. Йĕпреç	75,5
21. Ишлей	74,7
22. Комсомольски	74,4
23. Улатăр	71,6
24. Первомайски	71,3
25. Чкаловски	70,5
26. Хĕрлĕ Чутай	68,2
27. Тăвай	64,9
28. Çĕмĕрле	63,7
29. Шăмăршă	58,6
30. Кувакино	45,0

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВĂН ÇАПАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă
1. Шăмăршă	96,5
2. Первомайски	84,2
3. Вăрнар	83,8
4. Куславкка	83,7
5. Çĕрпÿ	83,3
6. Шупашкар	83,3
7. Йĕпреç	83,3
8. Октябрьски	83,0
9. Чкаловски	82,8
10. Красноармейски	82,7
11. Вăрмар	82,4
12. Элĕк	82,1
13. Канаш	81,4
14. Тăвай	81,3
15. Елчĕк	80,8
16. Калинино	80,7
17. Ишлей	79,4
18. Комсомольски	78,9
19. Шăхасан	78,5
20. Хĕрлĕ Чутай	78,2
21. Чурачăк	77,8
22. Сĕнтĕр	76,9
23. Муркаш	74,9
24. Улатăр	73,2
25. Кувакино	72,7
26. Сĕнтĕрвăрри	71,4
27. Çĕмĕрле	71,0
28. Советски	67,3
29. Пăрачкав	65,3
30. Етĕрне	63,4

Малтисемпе танлашмалла

ÇĔРПЎ. Районри чылай колхозсем авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕççене туса пĕтерчĕç.

Кăçал уйрăмах «Ĕмĕт», «Молот», «Дружба» тата «Балтиец» колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Çак колхозсем государствăна тырă парса татнă, сывăх кунсенчех авăн çапса пĕтереççĕ.

Асăннă колхозсенче кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ. Çак колхозсенче ĕçе тĕрĕс организациленĕ. Кунта çĕрле те кăнтăрла та ĕçлеççĕ. Авăн çапнă çĕре колхозри ĕçлеме пултаракан пур çынсене те мобилизациленĕ, машинăсемпе туллин усă кураççĕ.

Анчах районра чылай колхозсем авăн çапас, государствăна тырă парас тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕççенче кая юлса пыраççĕ. Уйрăмах ку тĕлĕшпе «Красный октябрь», «Совет», «Авангард», Куйбышев ячĕпе тăракан, «Кульмет» колхозсем япăх ĕçлеççĕ. «Совет» колхозра халĕ те кĕлтене çуррине те уйхиртен турттарса кĕртмен. «Авангард» колхоз районра чи кайран тырă вырса пĕтерчĕ. Кунта уйри кĕлтене çуррине те турттарса пĕтермен. Çак колхозсем юлса пыни вăл пĕтĕмпех колхоз руководителĕсем ответлăха туйманнинчен килет. Вăл колхозсенче кăнтăрла çеç ĕçлеççĕ, вĕсенче сăлтавсăр ĕçе тухман çынсен шучĕ те пысăк.

А. ИВАНОВ.

АВĂН ÇАПМА ВАСКАМАÇÇĔ

ЧУРАЧĂК, октябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Хирти Тукайĕнчи «Пучах» колхоз кăçал уйрăмăнах лайăх ĕçлет. Колхоз сентябрĕн 19-мĕшĕ тĕлнех авăн çапса пĕтерчĕ, государствăна тырă парас плана районра чи малтан тултарса, халĕ планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне пама тытăнчĕ. Çавăн пекех авăн çапас тĕлĕшпе «Красный флот», «Большевик» тата «Победа» колхозсем те лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем çитес кунсенчех авăн çапса пĕтереççĕ.

Авăн çапас тĕлĕшпе Молотов ячĕпе тăракан, «Новый путь» тата ытти хăшпĕр колхозсем юлса пыраççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхозăн тата 200 гектар çинчи тырра çапмалла. Колхозăн молотилка çук пирки кунта алăпа кăна çапаççĕ. Анчах алăпа çапнă çĕрте те 20—24 çын, хăшпĕр кунсенче унтан та сахалтарах ĕçлеççĕ. Авăн çапса ĕлкĕреймен пирки колхоз государствăна тырă памалли плана та тултараймарĕ. Колхоз МТС-па договор тунă, анчах МТС пулăшма мар, хăй чăрмантарса пырать. МТС колхоза юсавлă мар молотилка ярса панă пирки кунта ăна 2—3 эрне юсарĕç. Юсаса пĕтернĕ хыççăн вара каллех урăх колхоза илсе кайрĕç. Çавна пула ку колхоз авăн çапас тĕлĕшпе районра чи кайра пырать.

Ф. АНИФЕРОВ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Ĕç хăвăртлăхне татах та ÿстермелле

ОКТЯБРЬСКОЕ, октябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Çанталăк йĕпе-сапаллă тăнине пăхмасăрах районри колхозсем çĕрулми кăларас тĕлĕшпе хĕрÿллĕ ĕçлеççĕ. План тăрăх пурĕ 1.756 гектар çĕрулми кăлармалла пулнă пулсан, ĕнерхи кун тĕлне 1.655 гектар çĕрулми кăларнă. Ку тĕлĕшпе колхозсене шкул ачисем те нумай пулăшаççĕ. Çĕрулми кăларас тĕлĕшпе уйрăмăнах «Трудовик», «Правда» тата «Волга» колхозсем кая юлса пыраççĕ. Вĕсен кашниннех татах 10-шар гектар çĕрулми кăлармалла.

Çĕрулми кăларнипе пĕрлех уйхирти тырпула турттарса капана хывас тĕлĕшпе те район ĕçе чылай хăвăртлатрĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районĕпе пурĕ 52 колхоз капан хывса пĕтернĕ. Çав вăхăтрах «Дружба», «Память Ленина» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем кĕлте турттарса капан хывас тĕлĕшпе ытла та сÿрĕккĕн ĕçлеççĕ. «Дружба» колхозăн 100 гектар, «Память Ленина» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсен кашниннех 30 гектар ытла кĕлте турттармалла.

В. КРЫЛОВ.

Пикенерех ĕçлени кăна кирлĕ

ИШЛЕЙ. Районри чылай колхозсем государствăна тырă парса тата авăн çапса пĕтереççĕ. «Гвардия» колхоз (председателĕ А. Смирнова юлташ) государствăна тырă, çĕрулми тата пахчаçимĕç парса татрĕ. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 120 пăт тырă тата 210 пăт çĕрулми пачĕ. Çапла вара çак колхоз государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене пĕтĕмпех пурнăçларĕ.

«Красноармеец» колхоз та государствăна тырă тата çĕрулми парса татнă. Хĕрлĕ Çар фондне 700 пăт тырă 360 пăт çĕрулми панă. «Красный Октябрь» колхоз (председателĕ А. Максимов юлташ) ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлерĕ. Халĕ планран ирттерсе государствăна тырă тата çĕрулми парать. «Ырашпулăх» колхоз çак кунсенчех авăн çапса пĕтерет.

Çапах та районри хăшпĕр колхозсем авăн çапас тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе ытла та юлса пыраççĕ-ха. Район центрĕнчи «Ишлей» колхозăн 123 гектар çинче турттарман кĕлтесем япăхса лараççĕ. «Знамя победы» колхозра 5 гектар çĕрулми кăларман. Халĕ авăн çапма пур условисем пур пулин те, авăн çапмаççĕ. Колхоз председателĕ И. Иванов ăшăрах кунсем пулĕç-ха, тесе сÿпĕлтетсе ларать. Колхозăн государствăна татах 70 центнер тырă памалла. Халиччен кунта: лаша çитмест, тесе ларатчĕç. Халĕ ĕнтĕ сывăхрах тырă илекен пункт организациленĕ. Анчах та государствăна тырă парас ĕç çав-çавах çителĕксĕр пырать.

Районри 86 колхозран 49 колхоз капан хывса, 30 колхоз авăн çапса пĕтернĕ Государствăна тырă, çĕрулми тата пахчаçимĕç парса тăтмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăхлăх вĕçленсе пырать. Çак уйăхлăхăн задачисене пурнăçлама пикенерех ĕçлени тата мĕнпур колхозниксене мобилизацилени кăна кирлĕ.

В. ГУСЬКОВ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕнчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ калама çук чаплă вырăс ученăйĕ-математикĕ, механикĕ тата карапсем тăваканĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ Алексей Николаевич КРЫЛОВ академик вилни çинчен хурланса пĕлтерет. А. Н. Крылов йывăр чирлесе выртнă хыççăн октябрĕн 26-мĕшĕнче 83 çула çитсе вилнĕ.

СУЙЛАВ ПОЛОЖЕНИНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Çавал сырмари сичĕ çул вĕренмелли шкулта çĕнĕрен агитколлектив организациленĕ. Агитколлективра 8 çын, ăна ВЛКСМ членĕ Никандров учитель ертсе пырать. Халĕ агитколлектив членĕсем СССР Верховный Советне суйламалли Положение ăнлантарас тĕлĕшпе колхозсенче пухусем ирттереççĕ.

Никандров юлташ «Новый мир» колхозри 2-мĕш бригадăра, Тимофеев — 3-мĕш бригадăра, Кузьминпа Кириллова юлташсем «Индустрия» колхозри бригадăсенче, А. М. Русин «Новое хозяйство» колхозра суйлав Положенийĕн 1-мĕш сыпăкне ăнлантарса пачĕç.

Агитколлектив суйлав Положенийĕн кашни сыпăкне, кашни статьине тĕплĕн ăнлантарса парассишĕн тăрăшса ĕçлет.

Занятисем палăртнă кунсенче йĕркеллĕ пулса пыраççĕ.

З. ПОРФИРЬЕВ.

СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ çинчен тумалли докладсемпе калаçусен ТЕМИСЕМ

1. СССР Верховный Советне суйламалли Положени—Сталинла Конституцин çирĕп принципĕсем тăрăх çырнă чи чаплă документ.
2. Советлă, Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ—Совет Союзĕнчи государство влаçĕн чи аслă органĕ.
3. Сталинла Конституци—Совет государствин тĕп законĕ.
4. СССР гражданĕсен прависемпе обязанноçĕсем.
5. Советлă социализмлă государство—тĕнчери чи демократиллĕ государство.
6. Социализмлă строй капитализмлă стройран малта тăни.
7. Совет Союзĕнчи халăхсен çирĕп туслăхĕ — ленинла-сталинла наци политикин çав тери чаплă çĕнтерĕвĕ.
8. Совет Союзĕн хăвачĕпе тĕреклĕхĕн çăлкуçĕсем.
9. Аслă вырăс халăхĕ—çав тери чаплă халăх тата Совет Союзĕнчи ертсе пыракан вăй.
10. Ленинпа Сталин партийĕ—пирĕн çĕнтерÿсене хавхалантараканĕ тата организацилекенĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

ÇĔНĔ УЧЕБНИК

Пичетрен чăваш шкулĕсене валли А. Т. Трофимов çырнă чăвашла букварь тухнă. Союзпечать тата Когиз вĕсене районсене ярса параççĕ.

Гарриман господин СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче пулни

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕ Трумэн господин СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патне çыру яни çинчен ют çĕршывсенчи хаçатсенче пĕр-пĕрипе килĕшмен хыпарсем пичетлесе кăларчĕç.

Авторитетлă учрежденисенче ыйтса пĕлнĕ хыççăн çакă паллă пулса тăчĕ: Трумэн президент хăйĕн çырăвне октябрĕн 14-мĕшĕнче янă. Ăна И. В. Сталина Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен посолĕ В. А. Гарриман октябрĕн 24-мĕшĕнче панă. В. А. Гаррймана Трумэн президент И. В. Сталин патне кайса, çав çырура çырнине ăнлантарса пама хушнă. Гарриман господин И. В. Сталин патĕнче Сочи районĕнче пулнă (И. В. Сталин хăйĕн отпускне çавăнта ирттерет), унпа вĕсем икĕ хутчен калаçнă. Октябрĕн 26-мĕшĕнче Гарриман господин Мускава таврăннă.

(ТАСС).

Шкулсенчи вĕренÿ çулĕн малтанхи чĕрĕкĕ

Октябрĕн 26-мĕшĕнче В. П. Потемкин ертсе пынипе РСФСР Наркомпросĕн коллегийĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура пуçламĕш тата вăтам шкулсен управленийĕн начальникĕн Парфенова юлташăн докладне итленĕ. Тепĕр темиçе кунран вĕренÿ çулĕн малтанхи чĕрĕкĕ пĕтет. Кăçал вĕренÿ çулĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, вăхăтра тата йĕркеллĕ пуçланчĕ. Шкулсене вĕренÿ çулне хатĕрленме партии организацийĕсемпе общественность та чылай пулăшу пачĕç. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче колхозниксем хăйсен вăйĕпех çĕнĕ шкул çурчĕсем туса лартрĕç, кивvисене юсарĕç. Вологда, Курск, тата Горький облаçĕсенче, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăха пăхмасăрах, халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен органсем халăх пулăшнипе вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленчĕç. Казах АССР-ĕнче, Мускавра, Куйбышевра тата ытти хуласенче те ачасене шкула илес плана ирттерсе тултарнă. Докладчик тата çавна палăртнă: Мускав, Тамбов, Челябинск, Чита тата ытти облаçсенче вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕсенчех пур ачасем те шкула пыман. Çичĕ çулти пур ачасем те пĕрремĕш класа шкула çÿремен хуласем те пур-ха. Вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле тĕрлĕрен урăх организацисем йышăннă 1:244 шкул çуртне пушатмалла пулнă, халĕ 377 çурта кăна пушатнă. Мускавра та 26 шкулта виçĕ сменăпа вĕрентме тивет.

Вĕренÿпе воспитани ĕçĕ тĕлĕшпе кăçал чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç. Анчах çапах та инспекторсем тĕрĕслени çакна кăтартса парать: хăшпĕр шкулсенче вĕренÿ ĕçне çиелтен туса пыраççĕ, пĕрре вĕрентнине тепĕр хут тĕрĕслесе аса илтермеççĕ, учительсен квалификацине ÿстерсе пымаççĕ. Мускав, Ленинград тата Горький хулисенчи шкулсем ачасене хăйсем тĕллĕн ĕçлесе вĕренме хăнăхтарас тĕлĕшпе питĕ паха опыт пухрĕç. Çав опыта пур шкулсене те сарман-ха.

Наркомпрос коллегийĕ вĕренÿпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мероприятисем палăртса хăварчĕ. (ТАСС).

Совет çĕршывĕ тăрăх

НОВГОРОДРИ КРЕМЛЬ ПАРКĔ

А. Л. Ротач, А. Н. Колесов, Ю. Э. Крушельницкий архитекторсем авалхи кремль тавраşĕнчи парка юсаса çĕнетмелли проекта туса хатĕрленĕ.

Халĕ çав архитекторсем ертсе пынипе строительство ĕçĕ пуçланнă: йывăççем лартма шăтăксем чавнă. Хуларн ĕççынисем пĕтĕмпе 8.500 йывăçа яхăн лартнă. Лартмалли йывăçсене Сольцы тата ытти вăрмансенчен илсе килеççĕ.

ХУÇАЛĂХА ЮСАСА УРА ÇИНЕ ТĂРАТМА 13 МИЛЛИОН ТЕНКĔ ТĂКАКЛАНĂ

Смоленск облаçĕнчи колхозниксем нимĕç захватчикĕсем аркатса хăварнă хуçалăха юсаса ура çине тăратма кăçал питĕ пысăк тăкаксем тунă. Выльăх-чĕрлĕх туянма, ялхуçалăх машинисем илме тата çурт-йĕрсем тума колхозсен уйăрăлми фондĕнчен 13 миллион тенкĕ ытла тăкакланă. Ку шута государство панă кивçен кĕмест. (ТАСС).

ÇАР ÇЫННИСЕН ÇЕМЬИСЕМ ВАЛЛИ ÇУРТСЕМ ТУНĂ ТАТА ЮСАНĂ

ЛЕНИНГРАД, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Ленинград облаçĕнчи хуласемпе ялсенче çар çыннисен çемьисем валли çуртсем тумалли тата юсамалли уйăхлăх вĕçленнĕ.

Гатчина хулинче 207 хваттер юсанă. 59 çемьене строительство материалĕсем панă. Парголово районĕнче 180 хваттер тата 22 общежити юсанă.

Ленинград облаçĕнчи çав уйăхлăх вăхăтĕнче мĕн пурĕ 218 çурт туса лартнă, 112 çурт юсанă, темиçе пин хваттере тĕпрен юсаса хунă.

Ÿкерчĕк çинче: Пятницкий ячĕпе тăракан государство хорĕ. Малта тăраканнисем—орденлă артисткăсем В. Клоднина (сулахайри) тата А. Прокошина.
Е. ТИХОНОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

КИРГИЗ ХАЛĂХĔН МАЛТАНХИ ФИЛЬМНЕ ЎКЕРЕÇÇĔ

ФРУНЗЕ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Киргиз халăхĕн «Семетей—Манас ывăлĕ» ятлă малтанхи художественăллă фильмне ÿкерме пуçланă. Ку фильмăн сценарине К. Исаевпа киргизсен паллă писателĕ Д. Боконбаев «Манас» ятлă халăх эпосĕ тăрăх çырнă. Фильмра Манас ывăлĕн пурнăçне сăнласа параççĕ. Вăл ашшĕн ĕçне малалла туса пырса, киргиз халăхне ют çĕршыв пусмăрçисемпе вĕсен ставленникĕсене хирĕç кĕрешме пĕрлештерни.

СУЙЛАВ КАМПАНИЙĔ ВАЛЛИ ШРИФТСЕМПЕ ХУТ

ЛЕНИНГРАД, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ленинградри шрифт тăвакан завод Узбек, Таджик тата Туркмен ССР-ĕсем валли суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче кирлĕ пулакан шрифтсене тума тытăннă.

КРАСНОКАМСК, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Краснокамскри хут комбинатĕнче суйлав кампанийĕ валли хут тума правительство панă задание тултарнă.

Суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче усă курма Вăтам Азие, Çĕпĕре, Балтика тинĕсĕ тăрăхĕнчи республикăсене, Инçетри Хĕвелтухăçне тата Украинăна пĕтĕмпе 100 вагон хут янă. Çурçĕрти инçетри облаçсене хута самолетпа ăсатнă.

ВОЛОГДА, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Сокольри Куйбышев ячĕпе тăракан хут комбинатне СССР Верховный Советне суйламалли тĕрлĕрен документсем пичетлеме 150 тонна лайăх хут туса кăларма задани панă. Çав заказа комбинат срокчĕпех тултарнă.

ÇĔПĔРТИ ХУЛАСЕНЕ ÇĔНЕТМЕЛЛИ ПРОЕКТ

ЛЕНИНГРАД, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Хуласене çĕнетес тĕлĕшпе ĕçлекен Государство институчĕн инженерĕсемпе архитекторсем Çĕпĕртен таврăннă. Вĕсем Çĕпĕрти Томскпа Тюмень хулисене çĕнетмелли плансем туса хатĕрленĕ.

Архитекторсен руководителĕ М. И. Баранов ТАСС корреспондентне çапла каласа панă:

«Томск хулин варринче Советсен Çурчĕ, 1.200 çын вырнаçмалăх драма театрĕ, 1.500 çын вырнаçмалăх цирк тата 250 номерлĕ гостиница пулать. Томь юханшывĕн хĕррине, хула тĕлĕнче, 3 километр тăршшĕ çирĕплетмелле, унта вара ученăйсен çуртне, хула музейĕн çуртне туса лартмалла. Çавăн пекех тата культурăпа канăç паркне тума палăртнă».

«РОШАЛЬ» ПАРОХОД ÇĔНĔ ÇĔР ÇИНЧЕН ТАВРАННĂ

Çĕнĕ Çĕр çинчен Архангельска «Рошаль» пароход таврăннă. Вăл Русановăна, Белужья Губана, Лагерьная тата Крестовая Губасене полярниксем, вăл шутра учительсемпе медицина работникĕсем леçсе хăварнă. Зимовщиксем валли пахчаçимĕç, промышленность таварĕсем тата апат-çимĕç парса хăварнă. «Рошаль» пароход иртнĕ хĕлре, çуркуннепе çулла хатĕрленĕ çăва, какая, тинĕс кайăкĕсемпе ытти тĕрлĕ тискер кайăксен тирне, çавăн пекех тата зоологи сачĕсем валли чĕрĕ шур упасем илсе килнĕ. «Рошаль» пароход çинче Советăн Поляр унки леш енчи çĕрĕсене хÿтĕленĕ моряксем те демобилизаци йĕркипе таврăннă. (ТАСС).

Суйлав законĕ çинчен пĕлсе тăма

4. Вăрттăн сасăлас йĕрке тата ăна мĕнле пурнăça кĕртеççĕ

Совет Союзĕн Сталинла Конституцийĕ тăрăх, депутатсене вăрттăн сасăласа суйлаççĕ. Суйлав Положенийĕнче ун пирки çапла каланă: «СССР Конституцийĕн 140-мĕш статьи тăрăх, СССР Верховный Советне вăрттăн сасăласа суйлаççĕ», тенĕ.

Суйлав законĕ тăрăх тунă суйлав йĕрки чăннипех вăрттăн сасăлама май парать. Çавăн пек йĕрке тунине пула суйлавçă камшăн сасăланине никам та пĕлме пултараймасть.

Вăрттăн суйлас йĕркене «совет çыннисене вĕсем кама суйлас текен çынсемшĕн, хăйсен интересĕсене шанса панă çынсемшĕн ирĕклĕн сасăлама пултарччăр» тесе тунă, тенĕ Сталин юлташ.

Пирĕн суйлав законĕ тăрăх, сасăламалли йĕрке çакăн пек пулса иртет.

Кашни суйлавçă хăйшĕн хăй сасăлать. Суйлава хутшăнма вăл тивĕçлĕ вăхăтра суйлав участокне пырать, участокри суйлав комиссийĕн членне паспорт, колхоз членĕн кĕнекине, профсоюз членĕн билетне е хăй камне пĕлтерекен урăх йышши документа кăтартать те, участокри суйлав комиссийĕ суйлавçăсен списокĕнче унăн ятне шыраса тупса палăртнă хыççăн, суйлавçăна суйлав бюллетенĕ параççĕ. Суйлав бюллетенне илнĕ хыççăн, суйлавçă сасăлама ятарласа уйăрнă пӳлĕме кĕрет.

Суйлав бюлетенне тултарма кĕнĕ пӳлĕме сасăланă вăхăтра, сасăлама кĕнĕ çынсемсĕр пуçне, урăх никам та кĕме пултараймасть. Вăл шутра участокри суйлав комиссийĕн членĕсем те çав вăхăтра вăл пӳлĕмре пулма пултараймаççĕ. Суйлав бюллетенне тултарма пӳлĕме пĕр вăхăтрах темиçе çынна кĕртеççĕ пулсан, çав пӳлĕме ширмăсемпе е ытти майпа пӳлсе хураççĕ. Суйлавçă бюллетеньре хăй камшăн сасăлас текен кандидатăн хушаматне хăварать, ытти кандидатсен ячĕсене хуратса пăрахать. Суйлавçă хут пĕлмест пулсан, тĕрлĕ сăлтавсене пула (сăмахран, суккăр пулсан) бюллетене хăй тĕллĕн тултараймасть пулсан, суйлав иртекен пӳлĕме вăл хăйне пулăшма кирек кама та чĕнсе кĕртме пултарать. Бюллетеньре камшăн сасăлассине палăртнă хыççăн суйлавçă участокри суйлав комиссийĕ ларакан пӳлĕме куçать те, çав бюллетене хăй аллипе суйлав ешчĕкне ярать.

Суйлав бюллетенĕсене тултарма хăйне уйрăм пӳлĕм пулни суйлавçă камшăн сасăланине никам та пĕлмелле мар тăвать. Суйлав бюллетенне суйлавçă сургучпа пичетленĕ ешĕке хăй аллипе янине пула, вăл камшăн суйланине никам та пĕлме пултараймасть. Çапла майпа вара чăн-чăн вăрттăн суйлас йĕрке пурнăça кĕрет.

Вăрттăн сасăламалли йĕрке кашни совет гражданиннех вăл камшăн сасăлас тет, çавăншăн сасăлама май парать.

Вăрттăн сасăлас йĕрке вăл совет влаçĕ хăйĕн пĕтĕм органĕсене ĕççыннисене контроллесе тăма лайăхрах майсем туса парассишĕн тăрăшнине пĕлтерет. Совет Конституцийĕ Советсен депутачĕсене суйланă чухне уççăн сасăлас йĕркене пĕтерсе, суйлавсем татах та ирĕклĕрех пулса иртчĕр тесе, вăрттăн сасăламалли йĕрке туса хунă. «Вăрттăн сасăласа тĕрĕслени,—тенĕ А. А. Жданов юлташ,—пирĕн работниксене питĕ тĕплĕн тĕрĕслесе пăхни пулать; вăрттăн сасăлас йĕрке массăсене килĕшмен кандидатсене суйламасăр хăварас тĕлĕшпе ку таранччене хи пек те мар пысăкрах майсем туса парать».

Вăрттăн сасăламалли йĕрке ĕççыннисене суйласа лартнă çынсен ĕçне контроллесе тăма лайăх майсем парать, халăхăн политикăллă активлăхне ӳстерме пулăшать.

Буржуаллă демократи условийĕсенче суйлав системине хакламасăр ăна пăсни, суйлавçăсен правине хисеплеменни час-часах палăрать. Тĕрлĕрен чее майсемпе усă курса, буржуаллă çĕршывсенче ĕççыннисен суйлав тивĕçне пăсаççĕ.

Пирĕн çĕршывра вăрттăн сасăламалли суйлав йĕрки совет органĕсемпе халăхăн çарлака массисем хушшинчи çыхăнăва ӳстерсе çирĕплетме пулăшса тăрать. Кашни суйлавçăна Верховный Совет депутачĕсене вăрттăн сасăласа суйламалла ирĕк пани социализмла демократие вĕçне çитиччченех пурнăça кĕртсе пыни çинчен пĕлтерет. Çӳлтен пуçласа аяла çитиччченех государство тытăмĕн ĕçне массăсем контроллесе тăрасси çинчен каласа парать.

Пирĕн суйлав законĕ тăрăх, СССР Верховный Советне суйлас тата суйланас правăна пурнăça кĕртсе пыма СССР гражданинне пусмăрласа, улталаса, юнаса е подкуп туса чаракан кирек епле çынна та уголовнăй йĕркепе айăпласçĕ.

Суйлав законĕ суйлавçăн суйлав правине çирĕппĕн хӳтĕлесе тăрать. Совет халăхне суйлавсенче хăйĕн чăн-чăн ирĕкне палăртма май парать, унăн ирĕклĕн суйлас правине никам та чăрмантарма е чарса лартма пултараймасть.

СССР Верховный Советне вăрттăн сасăласа суйлани—Сталинла Конституци панă суйлав правин чи паха енĕсенчен пĕрийĕ пулса тăрать. Верховный Совета суйланă чухне вăрттăн сасăлас правăпа усă курни чи ирĕклĕ, чи демократиллĕ суйлавсем ирттерме май парать. Совет демократийĕ пирĕн çĕршыври гражданасен прависем çинчен каласа парать çеç мар, вăл правăсемпе туллин усă курма суйлавçăсене чăн-чăн майсем туса парать. Вăрттăн сасăлас йĕркене совет законĕсем хӳтĕлесе тăраççĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен районри пухăвĕ

ВАРНАР. Октябрĕн 25-мĕшĕнче кунта коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртре. Пуху пĕр ыйту—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXIII-мĕш пленумĕн решенийĕсем çинчен парти райкомĕн секретарĕ Я. Петров юлташăн докладне сӳтсе-явре. Докладчик Обком пленумĕн решенийĕсем çинчен каланипе пĕрлех, район Çĕнтерӳ ячĕпе ăмăрту пуçараканĕ пулса хăй илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçлани çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче районри колхозсем государствăна тырă ытти ялхуçалăх продукчĕсене парса тата ялхуçалăх çулне мĕнле вĕçлесе пыни çинчен каласа пачĕ.

Кăçал колхозсенче пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех уйрăм тата пĕчĕк ушкăнлă сдельщина тăрăх ĕçлесе тырпула пĕр тăккаламасăр сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пухса пĕтернĕ. Çапла ĕçленине пула ку таранччен палăрса тăман тата кая юлса пынă колхозсем те малтисен ретне тухрĕç. Ку шута Чапаев ячĕпе тăракан, Иртеменкассинчи «Победа», Ленин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те кĕреççĕ.

Тырă вырма тухнă-тухманах колхозниксем государство умĕнчи малтанхи тивĕçе пурнăçлассишĕн кĕрешӳ пуçласа янă. Çапла район республикăра чи малтан, октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татрĕ. Паянхи кун тĕлне государствăна тырă памалли плана район 105.8 процент тултарнă.

Государствăна тырă памалли обязательствăна пурнăçланă хыççăнах, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 80 пăт тырă пачĕ, районри ытти колхозсене те çавăн пек тума чĕнчĕ. Ун хыççăн ытти колхозсем те: Сталин ячĕпе тăракан колхоз 2.400 пăт, «Самолет» колхоз—1.735 пăт, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз—1.335 пăт, «1-ое Мая» колхоз — 840 пăт, «Победа» колхоз — 937 пăт пачĕç. Пĕтĕмпе районри колхозсем планран ирттерсе 400 тонна тырă пама пулнă. Вăл шутран 276 тонна хатĕрлев пунктне леçсе панă та ĕнтĕ. Ку ĕçе районри 48 колхозран 42 колхоз хутшăннă. Çĕрулми памалли плана тултарнă хыççăн, çавăн пекех планран ирттерсе çĕрулми пама 28 колхоз тытăннă.

1945 çулшăн 38 колхоз аш-какай парса татнă. Анчах районĕпе илсен, паянхи куна государствăна аш-какай парас плана 95,5 процент, сĕт-çу—75,5 процент, çăмарта—55,1 процент çеç тултарнă-ха. Ку тĕлĕшпе райуполнаркомзаг, заготскот тата ытти хатĕрлев работникĕсем начар ĕçлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене государствăна парас тĕлĕшпе Крупская ячĕпе тăракан, «Гвардеец», «Трудовик» колхозсем юлса пыраççĕ.

Кăçал МТС та колхозсене лайăх пулăшрĕ. МТС хăйĕн тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне 170 процент ытла тултарчĕ. авăн çапмалли тата кĕрхи çĕртме тумалли плансене те ирттерсе тултарнă.

Анчах район кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарман. «Советская деревня», «Ударник» колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана çурри чухлĕ те тултарман. Авăн çапас ĕç «Рапорт», Крупская ячĕпе тăракан, «1-ое мая», «Гвардеец» колхозсенче юлса пырать.

Коммунистсен районри пухăвĕ выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес ĕç уйрăм колхозсенче юлса пыни çинчен палăртса хăварчĕ.

Прениссенче пĕтĕмпе 10 çын тухса каларĕç. Коммунистсен районри пухăвĕ сӳтсе-явнă ыйту тăрăх тивĕçлĕ решени йышăнчĕ. Авăн çапас ĕçе ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерме, ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна çĕрулмипе пахчаçимĕç тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене пĕтĕмпех парса татма хушса хăварчĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Колхозри комсомолецсем

Пĕр çул каялла Етĕрне районĕнчи «Пионер» колхоз руководствинче колхоза ертсе пыма пĕлмен, государствăпа колхоз интересĕсемшĕн сахал тăрăшнă çынсем ĕçленĕ. 3—4 çул каярах районра малта пыракан колхоз чи кая тăрса юлнă, унăн хуçалăхĕ юхăннă. Комсомол организаци умне колхоз руководствине çĕнетес, колхоза ура çине тăратас задача тухса тăнă. Çакăн çинчен комсомолецсем колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса панă, колхозниксем вĕсен пуçаруне хапăлласа йышăннă, колхоз руководствине çĕнĕ çынсем суйласа лартнă.

Халĕ колхозра 11 комсомолец, вĕсем пурте колхозри ответлă вырăнсенче ĕçлесе лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Г. Алексеев комсомолец колхоз председателĕн заместителĕ пулса ĕçлет. Вăл 82 хăмăт çĕнĕрен тутарнă, 37 çĕнĕ çуна, 38 урапа, ытти ут таврашĕсене те çителĕклĕ таран туса хатĕрленĕ. Ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе тата колхозри строительство ĕçне те вăлах ертсе пырать.

Колхозри ĕçсем чылай йĕркелесе çитнĕ пулин те, 4-мĕш бригадăра ĕç уйрăмах япăх пулнă, бригадăра ĕç дисциплини çителĕклĕ пулман. Комсомолецсем çак ĕçе тĕплĕн сӳтсе-явса ку бригадăна бригадир пулса ертсе пыма урăх бригадăри С. Пугачев комсомолеца лартнă. Çак ĕç суракине тухиччен уйăха яхăн маларах пулса иртнĕ. Акана тухиччен юлнă кĕске вăхăтра усă курса, Пугачев кирлĕ ĕçсене туса çитерсе ытти бригадăсемпе танлашнă.

Суракн пĕтнĕ хыççăнах тырпул пухса кĕртме хатĕрленме тытăнчĕç. Колхозăн тăватă жнейка, анчах вĕсене виçĕ çул хушши ĕнтĕ уя илсе тухман, машинистсем те пулман. Тырпул пухса кĕртме колхозăн машинăсене юсамалла пулнă. Комсомолецсем вара колхозăн чи лайăх тимĕрçи—колхоз председателĕ пулса ĕçлекен Федоров патне пынă. Вĕсем председательпе каласса татăлнă хыççăн тепĕр куннех тимĕрç лаçинче вут-хĕм ялкăшнă, колхоз председателĕ жнейкăсем юсама тытăннă. Федоров тăватă жнейкăна та юсаса çитернĕ, 262 çурла шăлланă, машинистсем вĕрентсе хатĕрленĕ. А. Петров, А. Краснов, М. Максимов, П. Иванов машинистсем машинăсемпе 146 гектара яхăн çуртырри вырчĕç. Хăйсенне анчах мар, кӳршĕри Мичурин ячĕпе тăракан колхоза та çуртырри вырма пулăшрĕç. П. Яковлева, Т. Данилова, М. Миднокова, Е. Петрова колхозницăсем, И. Чернов, А. Григорьев старикçем кунсерен машинăпа вырнă çуртырине çурмар гектар çыхса пынă, хăшпĕр чухне вĕсем кунне 7-шер ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Анчах авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсем юлса пынă. Итем çинчи ĕçе организацилессин комсомолецсен аллине пама кирли уççăнах палăрса тăнă. Комсомолецсем çак ыйтăва хăйсен пухăвĕнче сӳтсе-явнă та, итем çинчи ĕçе йĕркелеме Алексеев комсомолеца хушнă. Комсомолецсем ĕçе тĕрĕс йĕркелени ик-виç кунтах палăрнă. Тăватă кун хушши тăрăшса ĕçлесе, колхоз Заготзерно пунктне 22 тонна тырă леçсе панă. Халĕ государство умĕнчи парăма тултарнă, планран ирттерсе 80 центнер Хĕрлĕ Çар фондне тыра панă.

Комсомолецсем ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе те начар мар ĕçлеççĕ. Организацири пур комсомолецсем те политшкула çӳресе, ВКП(б) историйĕн кĕске курсне тата Сталин юлташ совет халăхĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен çырнă кĕнекине вĕренсе тухнă.

Н. ЦВЕТКОВ.

Гитлеровецсем Норвегире тыткăнри совет çыннисене вĕлерни çинчен калакан çĕнĕ хыпăрсем

ОСЛО, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Норвегири хаçатсем Норвегие нимĕçсем оккупацилесе тăнă вăхăтра унта тыткăнра пулнă совет çыннисене гитлеровецсем вĕлерни çинчен çĕнĕ хыпарсем пичетлеççĕ.

«Арбедербладет» хаçат çапла пĕлтерет: «Нумаях пулмасть Берген çывăхĕнчи масар çинче нимĕçсем пытарнă çынсен шăтăкĕсене тепĕр хут чавса пăхнă. 30 вырăсăн ӳтне тупнă. Çав вырăссене хăшне персе вĕлернĕ пулнă, хăшне урăх майсемпе тискеррĕн вĕлернĕ. Çапла, пĕр вырăсăн пуçне çапса çĕмĕрнĕ».

«Дагбладет» хаçат çапла пĕлтерет: Кристиансанн хулинче пĕр ĕçе йĕрлесе тĕпчеççĕ. «Кристиансанри полици нимĕçсем тыткăнри вырăссене вĕлерсе, хула çывăхĕнчи утрав çинче пытараççĕ пуль тесе нумайччен шухăшланă,—çырать хаçат.—Çак шухăш тĕрĕссине халь гестапон икĕ сотрудникĕ Глембпа Майер каласа панă. Çак ĕçе Англи капитанĕ Будо Норвеги полицмейстрĕпе Бюнинг-Неннесенпа (хулари медицина пайĕн заведующийĕпе) тата ытти çынсемпе пĕрле йĕрлесе тĕпчет. Тĕпченĕ çĕрте Англин темиçе офицерĕпе полицейскийĕ те пулаççĕ. Полицири хыпарсем тăрăх, çав утрав çинче тыткăнри вырăссене пытарнă 25 шăтăк пур. Çав вырăссенчен 17-шне Глемб хăй вĕлернĕ, ыттисене Майер вĕлернĕ. Çак çынсем каласа панă тăрăх, тыткăнри çынсене малтан çарамаслантарнă, унтан шăтăк патне илсе пырса тăратнă та ĕнсисенчен пульăпа персе вĕлернĕ.

Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çав вилĕсене халь 10 нимĕç салтакĕ чавса кăлараççĕ.

ИНДО-КИТАЙРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ПАРИЖ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: Франци çарĕсем Индо-Китайри восстани тăвакан халăхпа Сайгон районĕнче çапăçма пуçланă. Ми-То хулине французсем Франци тинĕс пехоти, колони çарĕсен салтакĕсем тата парашютистсем пĕрле килĕштерсе çапăçнă хыççăн йышăнса илнĕ. Французсен çар карапĕсем Меконг шывĕн варрине кĕнĕ те çавăнтан восстани тăвакан халăха тупăсемпе персе тăнă.

ИНДИ ÇАРĔСЕМ ЯВА УТРАВĔ ÇИНЕ АННА

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 25-мĕшĕнче Ява утравĕн çурçĕр-хĕвелтухăç хĕрринчи Сурабайя хулине Инди çарĕсем пырса кĕнĕ. Вĕсене хирĕç тăрса çапăçакан пулман.

МАЛАЙĂРИ ХУМХАНУСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Азири Малака çурутравĕ çинчи Англи владенийĕ пулса тăракан Малайăри Перак провинцийĕн хулисемпе ялĕсенче демонстрацисем пуçланса кайнă. Çав демонстрацисене салатса яма иртнĕ эрне вĕçĕнче Англи çарĕсене илсе пынă. Демонстрацисене ялавсем çĕкленĕ çынсем ертсе пынă. Ялавсем çинче çапла çырнă: «Пире ĕç парар», «Пире рис кирлĕ». Сунгей Сийут районĕнче демонстраци пухăннă халăх саланма килĕшмен, вара вĕсене çарсем пеме пуçланă. Пĕр çынна вĕлернĕ, темиçе çынна амантнă.

БРАЗИЛИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентстви Рио-де-Жанейро хулинчен панă пĕлтерӳре çапла каланă: Бразилин çар министрĕ Гоэс Монтейро халăха çапла пĕлтернĕ: президента, малтан каланă пекех, декабрĕн 2-мĕшĕнче суйлаççĕ. Илнĕ хыпарсем тăрăх, профсоюзсем çак суйлав умĕн учредительнăй пуху пухтарасшăн, çавăнпа та вĕсем ноябрĕн 20-мĕшĕнче забастовка пуçласа яма хатĕрленеççĕ.

Политикăллă пысăк организацисем, вăл шутра коммунистсен партийĕпе халь çĕнĕрен тунă «Ĕççыннисен пĕрлешӳллĕ юхăмĕ» ятлă организаци, учредительнăй пуху пухма ыйтаççĕ.

АНГЛИН ГРАЖДАН АВИАЦИ МИНИСТЕРСТВИН ПАРЛАМЕНТРИ СЕКРЕТАРĔ КАЛАНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, граждан авиаци министерствин парламентри секретарĕ Айвори Томас общинăсен палатинче, панă ыйту çине ответлесе, çапла каланă: Англи правительстви Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене хăйсен авиаци çулĕсем валли «5-мĕш ирĕклĕх» прависене Эйре правительстви панă условисемпе пама пултараймасть. «Англи правительстви авиаци транспортне йĕркеллĕн аталантарса пыма тăрăшать, Америка авиацийĕ валли вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк право пани çав политикăпа килĕшсе тăмасть», тенĕ Томас.

США-н ÇАР МИНИСТЕРСТВИ КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви çапла каласа панă: хальхи вăхăтра ют çĕршывсенче Америкăн оккупаци валли кирлĕ мар 3.750 пин салтакĕпе офицерĕ пурăнаççĕ, вĕсем Пĕрлешӳллĕ Штатсене июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне таврăнĕç. Çав вăхăтра оккупаци çарĕсенче 870.000 çын тăрса юлĕ, вĕсенчен 370.000 çын Европăпа Вăтаçĕр тинĕс районĕнче пурăнĕç, 400.000 çын—Лăпкă океан районĕнче, 100.000 çын—Панама каналĕ таврашĕнче, Аляскăра тата ытти çĕрсенче пурăнĕç.

ДАНИРЕ СИРПĔНТЕРЕКЕН ЯПАЛАСЕН ВĂРТТĂН СКЛАЧĔСЕНЕ ТУПНА

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Стокгольмри радио çапла пĕлтерет: Данипе Британи полицийĕ Данире 107 вăрттăн склад тупнă. Çав складсене датчансемпе нимĕçсен вăрттăн ĕçлекен фашисчĕсем Дание ирĕке кăлариччченех туса хунă. Данире тухакан «Информацион» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çав складсене сăтăрла ĕçсем тума хатĕрлесе хунă сирпĕнтерекен япаласем тултарнă. Çав складсенчен чылайĕшне масарсенче тата памятниксем айĕнче туса хунă.

РОБЕРТ ЛЕЙ ÇАКĂНСА ВИЛНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, «Ĕç фрончĕ» текен гитлерла организацин руководителĕ пулса ĕçленĕ Роберт Лей Нюрнбергри тĕрмере хăйĕн камеринче çакăнса вилнĕ. Лее сыватма тăрăшнă пулин те, сыватайман. Лее ăна главнăй вăрçă преступникĕсен списокне кĕртнĕ пулнă, çав преступниксен ĕçĕсене Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕ пăхса тухмалла.

АБЕЦА ТЫТСА ХУПНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Германин Франци оккупациленĕ пайĕнче, Швейцари чикки çывăхĕнче, Францие оккупацилесе тăнă вăхăтра унта Гитлерăн представителĕ пулса ĕçленĕ Абеца тытса хупнă.

КНУТ ГАМСУНА СУД ТĂВАССИ ÇИНЧЕН

ОСЛО, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтенпостен» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Норвеги писателĕн Кнут Гамсунăн (нимĕçсемпе пĕрле ĕçленĕскерĕн) ĕçне пăхса тухакан государство следователĕ Кнут Гамсунăн ăс-тăнне тĕрĕслеме кирлĕ тесе каланă. Çавăнпа Гамсуна нумаях пулмасть психиатри клиникине вырнаçтарнă. Унта ăна Лиангельд профессор сăнаса тăрать. Медицина экспертизи Гамсун ăс-тăнне йĕркеллĕ тесе йышăнсан, вара ăна, тăван çĕршыва сутнă тесе айăпласа, Арендальри присяжнăйсен судне памалла пулать.

КĔСКЕН

* Анкара хулинче Виши «правительствин» послĕ пулса ĕçленĕ Гастон Бержери октябрĕн 25-мĕшĕнче Париж çывăхĕнчи Бурже аэродромне вĕçсе пынă. Бержерие вара çийĕнчех арестленĕ те аэродромрах допрос тунă.

* Куба сеначĕ правительствăна Испанипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахма сĕнекен резолюци йышăннă.

Фермăсем хĕле хатĕр

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Пĕчĕк Этменти «Восток» колхозри колхозниксем обществăллă выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлесси çинчен хăйсен пухăвĕнче сӳтсе-явнă. Колхозниксен усăллă канашĕсем выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле лайăх хатĕрлеме пулăшрĕ.

Строительство бригади выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене юсас тата çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлерĕ. Бригада çĕнĕрен лаша, сурăх, сысна витисем туса пĕтерчĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансене пурăнма çĕнĕрен икĕ пӳрт туса лартнă.

Ферма çурчĕсем патĕнче малтанхи вăхăтра шыв çителĕклĕ марччĕ. Çавна шута илсе, фермăсем патĕнчи çырмара икĕ пĕве турĕç.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма çителĕклĕ таран апатсем хатĕрленĕ.

Як. СИГАЙ.

КОЛХОЗ ВĂРМАНĂН ШАНЧĂКЛĂ ХУРАЛÇИ

ИШЛЕЙ. Кипечкасси ял Советĕнчи «Большевик» колхозăн ял çумĕнче «Аняка варĕ» ятлă пĕчĕк вăрман пур. Çак вăрмана 5—6 çул хушши ĕнтĕ колхоз сачĕн хуралçи Вандрюков юлташ сыхлать. Вăрмантах колхозăн утар тата пулă кӳлли пур. Вăрмана вăл выльăх кĕртмест, йывăççене касасран тата тĕрлĕ майпа сиен кӳресрен хытă сыхлать.

Вандрюков юлташ, колхоз садне ĕрчетес енĕпе нумай çулсем ĕçленĕскер, садпа вăрмана питĕ юратать. Вăл вăрмана тимлĕн сыхланине пула, халĕ унти йывăççем вăйлă ӳсеççĕ.

В. ЧИГАРКИН.

Тĕнчери лару-тăру

Октябрĕн 21-мĕшĕнче Францире пĕтĕмĕшле суйлав пулса иртнĕ. Суйлавпа пĕрлех тата референдум пулнă. Депутата суйлама кăмăл тунă кандидатсен списокне çырнă бюллетене суйлав ешĕкне янипе пĕр вăхăтрах суйлавçă тата çакăн пек икĕ ыйту çине ответ панă; «Эсир хăвăр суйланă Пухăва Учредительнăй пуху тăвас тетĕр-и?» тата «Çĕнĕ Конституци пурнăça кĕриччен государство влаçне закон проекчĕ тăрăх организациллессине эсир ырлатăр-и?» Малтанхи ыйту çине килĕшӳллĕ ответ пани—Учредительнăй пухушăн сасăланине тата «Виççĕмĕш республика» текен Конституци патне таврăнассине хирĕç сасăланине пĕлтернĕ. Çав «Виççĕмĕш республика» хăйĕн кунçулне гитлерла Германие парăннипе пĕтерчĕ. Пĕрремĕш ыйту çине хирĕçле ответ пани—«Виççĕмĕш республикăн» режимне тата 1875 çулхи Конституцие çĕнĕрен туса хунине пĕлтерет. Иккĕмĕш ыйту суйлавçăсенчен Пухун прависене палăртса пама ыйтнă. Суйлавçă ыйту çине «çапла» тесе ответ пани—Пуху çĕнĕ Конституци тăваччен çичĕ уйăх хушшинче çеç правалла пулассине пĕлтерет.

Хирĕçле ответ вара суйлавçă Учредительнăй пухăвăн прависене нимĕнпе те хĕсме шутламаннине пĕлтерет.

Çапла ĕнте, французсем умне питĕ ответлă задачăсем тухса тăнă. Суйлавра политикăллă пур партисемпе ушкăнсем те хăйсене уйрăм платформăсем кăларса тăратни тата депутат кандидачĕсен уйрăм списокĕсене тăратни лару-тăрăва татах та йывăрлатнă. Социалистсен партийĕ коммунистсемпе суйлав блокĕ тума килĕшмен. «Орор» хаçатра çырнă тăрăх, хăшпĕр партисем суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче тытса пынă политика «çынсене пăтраштарма, татса памалли ыйтусен чăн-чăн пĕлтерĕшне хупласа хума пултарнă».

Анчах çапах та Франци халăхĕ суйлава йĕркеллĕ, политика тĕлĕшĕнчен лайăх ирттернĕ.

Суйлавра сасăсен хисепĕ тĕлĕшпе те тата суйланă депутатсен тĕлĕшпе те малти вырăна Францири коммунистсен партийĕ тухрĕ. Тулли мар даннăйсем тăрăх, коммунистсен партийĕшĕн 4.8 миллион суйлавçă ытла сасăланă, урăхла каласан, вăл мĕнпур суйлавçăсен чĕрĕкĕ коммунистсен партийĕшĕн сасăланине пĕлтерет. Çавна пула коммунистсен партийĕн 151 кандидатне суйланă. Çапла ĕнтĕ коммунистсен партийĕ Францин законсем кăларакан органĕнчи хăйĕн депутачĕсен хисепне икĕ хут ӳстерчĕ. 1936 çулта депутатсен палатинче коммунистсен партийĕн 72 мандат пулнă. Кунта тата çакна палăртмалла: коммунистсен кандидачĕсем рабочисем пурăнакан промышленность центрĕсенче çеç мар, чылай ялхуçалăх районĕсенче те ытларах сасă пухрĕç. Кун пек тĕслĕх Францире ку таранччен пулман-ха. Францири ытти партисем суйлавра сахалрах сасă пухса сахалрах вырăн йышăнчĕç. «Халăхăн республикăллă юхăмĕ» ятлă парти 142 мандат илчĕ. Çав парти де Голль генералăн шанчăкĕ пулса тăрать. Коммунистсемпе суйлав блокĕ тума килĕшмен социалистсем суйлавра 139 мандат илчĕç. Суйлав вăхăтĕнче вĕсем коммунистсене хирĕç питĕ хаяррăн кĕрешрĕç. Кунта çакна палăртмалла: социалистсен партийĕн лидерĕ Леон Блюм каланă тăрăх, суйлавра социалистсене чи сылтăмри элементсемпе ушкăнсем пулăшрĕç. Çав элементсемпе ушкăнсем социалистсен партийĕ буржуазие капитализма çăлаканĕ пулса тăрать тесе шутлаççĕ.

Политикăллă ытти партисемпе ушкăнсем суйлавра питĕ сахал сасă пухрĕç, тĕрĕссипе каласан, суйлавра вĕсем аяла пулчĕç. Ку суйлав радикалсен партийĕшĕн питĕ ăнăçсăр пулчĕ. Вăл пĕтĕмпе те 14 мандат çеç илчĕ (вăрçăччен хи депутатсен палатинче унăн 116 вырăн пулнă). Радикалсен партийĕн пуçлăхĕ Даладье, Мюнхенра Гитлерпа килĕшӳ тăвас ĕçе хутшăннăскер, суйлав вăхăтĕнче Совет Союзне хирĕç çав тери чарусăр агитаци тунă, çакăнпа вара вăл суйлавçăсем умĕнче радикалсен партийĕн ятне пăснă. Суйлавра радикалсен партийĕ аяла пулни Франци халăхĕ Даладьен Совет Союзне хирĕçле политикине ырламаннине кăтартса парать. «Ирĕклĕхе тата социальнăй прогреса сыхлакан республикăллă союз» ятлă блока пĕрлешнĕ реакционерсем те çав тери сахал сасă пухса 12 мандат кăна илнĕ. Сылтăмри «Альянс» ятлă парти, Пол Рейно ертсе пыраканскер, 10 мандат илнĕ.

Компарти çĕнсе тухни тата радикалсемпе сылтăмри партисем аяла пулни Франци халăхĕ «Виççĕмĕш республикăн» юрăхсăра тухнă режимне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкма шутланине лайăх кăтартса парать. Шăпах çакăн пирки ĕнтĕ Франци халăхĕ референдумăн пĕрремĕш ыйтăвĕ çине «çапла» тесе ответ пачĕ. Çавăнпа вăл çĕнĕ Конституцишĕн, социальнăй прогресшăн сасăларĕ. Референдумăн иккĕмĕш ыйтăвĕ çине панă ответ пĕр шухăшлăха ытлашши татăкланах кăтартса памасть. Учредительнăй пухун прависене хĕсес тесе 12 миллион суйлавçă сасăланă. Ку ыйтăва хирĕç 6 миллион суйлавçă ытла сасăланă. Çапла ĕнтĕ суйлава хутшăннă французсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ ытла Учредительнăй пуху прависене хĕсес тĕлĕшпе правительство кăларнă законопроекта хирĕç сасăланă.

* * *

Францири суйлавăн итогĕ Франци халăхĕ Мюнхенри политикăна çуратса кăларнă, нимĕçсен фашистла агрессине аталанма пулăшнă системăн юлашкийĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкма тăрăшнине кăтартса парать. Ирĕклĕхе юратакан ытти халăхсем те çавăн пек шухăш-кăмăлпах пурăнаççĕ. Ун çинчен, сăмахран, нимĕçсен вăрçă преступникĕсен ĕçĕ пирки айăпласа çырнине пĕлтернĕ хыççăн прогрессиллĕ-демократиллĕ хаçатсем мĕн çырни те лайăх кăтартса парать. Прогрессиллĕ-демократиллĕ общественность нимĕçсен вăрçă преступникĕсене айăпласа çырнине ырласа çакна палăртаççĕ: Нюрнбергри пулас суд фашизма татăклăнах пĕтерсе тăкма, çавăнпа пĕрлех вăл гитлерла мĕнпур хӳрешкесене пĕтерсе тăкма пулăшмалла.

Америкăри радиокомментатор Гордэ каланă тăрăх, Нюрнбергри судăн «йывăр преступленисем тунă çынсене наказанисĕр пуçне, тата историе уйрăм паха страница çырса хăвармалла. Вăл вара пирĕн пулас ăрăва ăс парса пымалла». Нюрнбергри суд, çапла ĕнтĕ, фашистла агресси пуçланса каяс хăрушлăха пĕтермелли паха мероприятисенчен пĕри пулса тăрать.

Кун çинчен асăрхаттарни халĕ питĕ вырăнлă, мĕншĕн тесен Тегеранри, Крымри тата Берлинри конференцисенче гитлеризма пĕтерес тĕлĕшпе палăртнă задачăсене пур çĕрте те пурнăça кĕртмесçĕ. Паллă ĕнтĕ, ют çĕршывсенчи хăшпĕр çынсем Германие экономика тĕлĕшĕнчен хĕçпăшалсăрлантарни усăсăр тесе шутлаççĕ. Темиçе кун каярах çеç «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла çырса пĕлтерчĕ: «Германири оккупаци влаçĕсен представителĕсенчен нумайĕшĕ Подстамри декларацине ытлашши хытă тесе шутлаççĕ. Вĕсем Германие экономика тĕлĕшĕнчен вăйсăрлатма кирлине ăнланмаççĕ». Тепĕр енчен тата Лондонри «Таймс» хаçатăн корреспонденчĕ çапла çырать: «Америка оккупациленĕ зонăран хăваласа янă паллă гитлеровецсем Франци оккупациленĕ зонăра лайăххах ĕçлесе пурăнаççĕ».

Юлашкинчен тата Япони фашизмне пĕтерес тĕлĕшпе тĕл пулакан йывăрлăхсене те манма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен Япони фашизмне пĕтерни те, Германи фашизмне пĕтерни пекех, питĕ паха вырăн йышăнса тăрать.

Çаксем пурте ĕнтĕ ирĕклĕхе юратакан халăхсем умне фашизма пĕтерес ĕçе тата ăна çĕнĕрен пуçласа яма пултаракан сăлтавсене пĕтерес ĕçе тимлĕнрех туса пырас задачăна кăларса тăратаççĕ.

П. РЫСАКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2.89, парти пурнăç пайĕн—3—9 7, промышленность пайĕн 3—9, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ_00665.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.